Шалти ĕçсен пайĕнче

Ĕçе тивĕçлипе пурнăçлатпăр

Çулталăк вĕçленсе пырать. Çĕнĕ çул умĕн вара эпир кашниех пĕтĕмлетӳсем тума тăрăшатпăр. Çулталăк хушшинче тунă ĕçсене тишкеретпĕр, туса çитерейменнисене вĕçлеме васкатпăр. Кашни çын кăна мар, кашни организаци, предприяти те çапла кĕтсе илет Çĕнĕ çула.

Йĕркене пăсни, обществăлла хăрушсăрлăх епле шайра пулни вара кашни çыннах интереслентерет. Çавăнпа та çулталăк вĕçленичченрайонти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхне Евгений Иванович ПЛЕЧОВА пирĕн ыйтусем çине хуравлама ыйтрăмăр.

– Евгений Иванович, мĕнле ĕçсемпе палăрса, мĕнле кăтартусемпе вĕçленсе пырать-ха 2009 çул районти шалти ĕçсен пайĕшĕн?

– Çак çул пĕтĕмлетĕвĕсем пирĕн 2007-2009 çулсем валли йышăннă комплексăлă программăна епле пурнăçланине пĕтĕмлетессипе пĕр килеççĕ. Преступленисене уçса парасси ӳссе пычĕ: 2007 çулта – 70,2 процент, 2008 çулта – 77,9 процент, 2009 çулта – 81 процент. Программа ĕçне хаклакан тепĕр ен вăл – йĕркене пăсакансене административлă явап тыттарасси. Çак асăннă виçĕ çул хушшинчи ку енпе цифрăсем çапла: 2007 çулта – 5868 тĕслĕх, 2008 çулта – 5873, 2009 çулта – 6315.

Программа хăйне пĕтĕмпех тӳрре кăларчĕ. Çапла вара район администрацийĕ те, депутатсен районти Пухăвĕ те пирĕн ĕçе лайăх енĕпе хакласа çитес çул валли бюджетра 500 пин тенкĕ пăхса хучĕç. Çакă кризис вăхăтĕнче пире уйăрмах хавхаланса ĕçлеме ыйтать.

Кăçал та район администрацийĕпе, депутатсен районти Пухăвĕпе килĕштерсе ĕçлесе пытăмăр. Çулталăк хушшинче пирĕн пай валли бюджетран 480 пин тенкĕ укçа уйăрни çакна çирĕплетсе парать те. Çавăнпа та район пуçлăхне те, депутатсене те тав сăмахĕ калас килет.

Çитес 2010-2012 çулсенче тĕллевлĕ ĕçлемелли программăна йышăнтăмăр ĕнтĕ.

– Преступленисен хисепĕпе паллаштарсан та ытлашши пулмасть пулĕ.

– 2009 çулхи 11 уйăх пĕтĕмлетĕвĕсем çинче чарăнса тăрас пулсан (çулталăк вĕçлениччентемиçе кун пурри те тĕрлĕрен лару-тăру кăларса тăратма пултарать), преступленисен шучĕ 404-па танлашрĕ. Ку кăтарту вăл пĕчĕк мар, анчах та пĕлтĕрхи кăтартуран 40 сахалрах.

Милици сотрудникĕн тĕп тивĕçĕ – обществăлла йĕркелĕхе, граждансен сывлăхĕпе пурнăçне сыхласси, Конституцие панă прависене хӳтĕлесси. Çавăнпа та районти пур муниципаллă, правăна сыхлакан органсемпе, предприятисемпе организацисен тата учрежденисен ертӳçисемпе килĕштерсе, пĕр чĕлхе тупса ĕçлесе пынин витĕмĕ те пурах çакăнта. Преступленисен шучĕ чакни тунă кашни преступлени çине ытларах тимлĕх уйăрма май парать. Çавăнпа та вĕсене уçса парасси те кăçал ӳсрĕ. 11 уйăх итогĕсемпе вăл 81,0 процентпа (пĕлтĕрхи çак тапхăрта – 78,5 процент) танлашрĕ. Кунта вара пирĕн сотрудниксем квалификацие куллен ӳстерсе пыни тата вĕсен оперативлăх шайĕ пысăкланни куçкĕрет.

– Ку, паллах, аван. Çапах та преступленисене тишкерес пулсан, районта мĕнле преступленисем ытларах сарăлнă?

– Пĕрремĕшĕ вăл – ют пурлăха вăрлани. Çакăн евĕр преступленисен шутне чакарма йывăр. Выртать ют çын япали – илсе чикеççĕ. Ку вăл преступлениçке. Акă кăçалхи асăннă тапхăрта вĕсен хисепĕ малтанхи çулхинчен 25 тĕслĕх пысăкланчĕ, çав хушăрах вĕсене уçса парассине те пысăклатма пултартăмăр. Транспорт деталĕсене, дача çурчĕсенчи, хваттерсенчи пурлăха вăрлани, магазинсене çаратни – çакăн йышши преступленисем анлăрах сарăлнă.

Алкоголь продукцине саккунсăр майпа çаврăнăша кăларнине хирĕç кĕрешесси пирки те каламасăр хăвармалла мар тесе шутлатăп. Кăçал пирĕн сотрудниксем прокуратура ĕçченĕсемпе пĕрле алкоголь продукцине çул çитменнисене сутнине тупса палăртас тесе рейдсем ирттерчĕç. Ерехпе ашкăнакансемпе профилактика ĕçĕсем ирттернĕ. Иртнĕ 11 уйăхра пурĕ 324 тĕрĕслев ирттернĕ районта. Йĕркене пăсакансенчен 12,250 литр этил спиртне, 125,0 литр спиртлă шĕвеке тата 7,5 литр сăмакун туртса илнĕ.

– Кăçал çулталăк пуçламăшĕнчен-пех çул çитмен ачасем тăвакан преступленисем геометри прогрессийĕпе ӳснĕнех пулса пычĕç. Апла çулталăк вĕçнелле лару-тăру мĕнлерех?

– Çул çитменнисем тунă преступленисен хисепĕ 27-пе танлашрĕ. Пĕлтĕрхинчен вĕсен хисепĕ чылай ӳсрĕ – 2 хут майлах. Районти шалти ĕçсен пайĕнче пурĕ çул çитмен 42 ача учетра тăрать, 38 ачана çулталăк пуçланнăранпа учетран кăларнă пулсан та. Профилактика ĕçне вăйлатма хистет çак пулăм. Çитĕнекен ăрава криминаллă пурнăçран сыхламалла.

Хăйсен çул çитмен ачисем пирки манса каякансем те çук мар. Хальлĕхе ашшĕ-амăшĕ хăйĕн тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаншăн 167 административлă протокол çырнă. Пирĕн патра паянхи кун тĕлне йывăр лару-тăруллă 13 çемье учетра тăрать. Вĕсем патĕнче тăтăшах пулса сотрудниксем тĕрĕслевсем ирттереççĕ.

– Евгений Иванович, терроризмла тата экстремизмла характерлă преступленисем ан пулччăр тесе шалти ĕçсен пайĕ мĕнлерех ĕçлесе пырать?

– Терроризмла тата экстремизмла характерлă, çавăн пекех наркотиксемпе тата хĕç-пăшалпа тăвакан саккунсăр суту-илӳ çаврăнăшĕпе кĕрешесси те пирĕн тĕп ĕçсен шутĕнчех. Профилактика ĕçĕсене туса пырасси çине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Чрезвычайлă лару-тăру пулман. Наркотиксемпе çыхăннă преступленисене 7, хĕç-пăшалпа тăвакан саккунсăр суту-илӳ çаврăнăшĕпе çыхăннă 5 преступлени тупса палăртнă.

– Юлашки вăхăтра çулсем çинче аварисем те тăтăшах пулнăн туйăнать. Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕ енĕпе 2009 çул мĕн кăтартса пачĕ?

– Шел пулин те, çул-йĕр правилисене çуран çӳрекенсем те, водительсем те пур чухне те пăхăнмаççĕ. Акă кăçалхи 11 уйăхра çак правилăсене пăснăшăн районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем çырнă протоколсемпе килĕшӳллĕн пĕтĕмĕшле 694410 тенкĕлĕх штраф панă. Пурĕ вара пирĕн район территорийĕнче 56 авари пулса иртнĕ. Вĕсенче 16 çын вилнĕ, 78 аманнă. Йĕркене пăсакан водительсем тĕлĕшпе 3158 протокол çырнă. Руль умне ӳсĕрле ларни ытларах чух илсе çитерет те авари патне. Иртнĕ тапхăрта 92 ӳсĕр водителе тытса чарнă.

(Вĕçĕ 6-мĕш стр.).

Сăн ӳкерчĕксенче: районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов; уйрăмсен пуçлăхĕсемпе пай пуçлăхĕн çумĕсен ларура сӳтсе явмалли чылай.

Килти хушма хуçалăх

Выльăха пама юрать-и?

Кăçал пан улми ăнса пулчĕ. Управа нӳхрепе хурайманнисем шăнса та кайрĕç. Нӳхрепре çĕрекеннисем те чылай. Пан улмине выльăха çитерме юрать-и?

Н. СИЛЬВЕСТРОВ.

Пан улми, паллах, выльăх апачĕ шутланмасть, анчах тымар çимĕç япăх çитĕннĕ çул ăна выльăха пама юрать. Анчах кунта ял çыннин асăрхану мелĕсене çирĕп пăхăнмалла. Пан улмине выльăхсене тураса çитерсен лайăхрах. Çимĕçĕн варрине выльăха памалла мар. Шăннă пан улмине пушшех те. Вăл хырăмлăхра япăх ирĕлет, чире яма пултарать. Пан улмине, сĕткенлĕ ытти апат пекех, валашкана пĕрре çимелĕх кăна хумалла. Нумай вăхăт иртсен вăл пăсăлать, выльăх сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратать. Тураса, варрине кăларса выльăхсем умне хурса панă пан улми усăллă апат, вăл кирлĕ тĕрлĕ витаминпа, фосфорпа, тимĕрпе, сахăрпа пуян. Çавăнпа вăл сĕт антарма, сывлăха çирĕплетме пулăшать.

Пан улми ăнса пулни лайăх пулăм, анчах унпа – уйрăмах шăннипе – ĕнесене, сурăхсене, качакасене тăрантарнă чух асăрхануллă пулмалла, виçерен иртмелле мар.

В. ИВАНОВ, выльăх тухтăрĕ.

01 асăрхаттарать

Уяв пирки маларах шутламалла

УМĔН КАЛАНИ. Районти пушар хăрушсăрлăхне тишкерсен, кăçалчченхи 4 çулта вут-кăвар алхаснă инкексем сахалланни курăнатчĕ. Анчах кăçалхи лару-тăру çак ырă туртăма ура хучĕ: кăçал район территорийĕнче пулнă 35 пушарта миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех 2 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Танлаштарма, пĕлтĕр çак хушăра 26 пушар пулнăччĕ пулсан, çав инкексенче те 2 çын пурнăçран уйрăлнăччĕ. Çакна палăртас килет, ытларах инкек хыçĕнче эрех-сăра тăрать. Умра пĕтĕм халăх пĕрле уявлакан Çĕнĕ çул уявĕсем. Кунта эрех-сăра та, пиротехника изделийĕсем те, çынсем савăнăç серепине путса тимлĕхе çухатни те пĕр тĕле килеççĕ. Çапла вара пушар хăрушлăхĕ те темиçе хут ӳсет.

Çĕнĕ çула кĕтсе илессине халăх пысăк уяв вырăннех йышăнать. Ку тĕлĕшпе коллективсенче çулленех çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ, елка илемне ӳстерме чылайăшĕ электричество çутипе, çуртасемпе, пиротехника изделийĕсемпе усă курать. Вĕсемпе усă курнă чух ответлăх туйăмне çухатни мĕнле хăрушлăхпа çыхăннине Пермь хулинче пулса иртнĕ пушар та çирĕплетет. 150 çын пурнăçĕ татăлчĕ хăрушла инкекре. Манас марччĕ çакна. Халĕ каланине шута илсен, Çĕнĕ çул уявĕсен тапхăрĕ пушар тухаслăх тĕлĕшпе уйрăмах пысăк хăрушлăхлă. Çавăнпа та Çĕнĕ çул уявĕсене «хĕрлĕ автан» ан тĕксĕмлеттĕр тесен, кашнийĕнех пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмалла. Çав тĕллевпе çывăх кунсенчех:

– ертӳçĕсен елкăсем ирттерме коллективсенче ответлă çынсене çирĕплетмелле;

– ответлă çынсен патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕнче пушар хăрушсăрлăхĕпе хальтерехех инструктаж илмелле, çавнах вырăнсенче Çĕнĕ çул ирттерме хутшăнакансемпе ирттермелле;

– елка ирттеричченпӳлĕмсене тĕплĕн тишкерсе тухмалла, пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсем çителĕклĕ пуласси тĕлĕшпе тимлĕх уйăрмалла;

– елка вăхăчĕ пирки вырăнти пушар хуралне маларах пĕлтермелле;

– елкăна пушар хуралĕн ирĕкĕсĕр вырнаçтармалла мар;

– елка ирттермелли пӳлĕмĕн урама тухма икĕ алăк пулмалла;

– елкăна алăксем патне вырнаçтарас çук, унпа стена тата мачча хушши пĕр метртан кая мар пулмалла;

– елкăна илемлетме хăвăрт хыпса илекен теттесемпе, ватăпа, бенгали çуртисемпе усă курма юрамасть;

– елкăра заводра хатĕрленĕ электрогирляндăсемпе çеç усă курмалла.

Халĕ каланă асăрхаттарусене çирĕп пăхăнсан кăна Çĕнĕ çул уявĕсем савăнăçпа нумайлăха аса юлĕç.

А. ЕФИМОВ, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн аслă инспекторĕ.

Обществăлла организацисенче

Пĕрле савăнтăмăр

Шупашкарта Л. Толстой ячĕллĕ ятарлă библиотекăра Раççейăн аслă поэчĕн А. Пушкинăн 210 çулхи юбилейне халалласа куç курманнисем хушшинче республика фестивалĕ иртрĕ. Ăмăрту программипе куç курманнисен обществин членĕсен вилĕмсĕр поэтăн пуян эткерлĕхне тĕрлĕрен номинацисенче уçса кăтартмалла пулчĕ (сăвăсем вуласси, юмахсем каласси, романссемпе сценкăсем – пурте А.С. Пушкин ĕçĕсем).

Çак пысăк уява республикăри 6 районтан килнĕ тата куç япăх куракан ачасен Шупашкарти ятарлă интернатĕнче вĕренекенсем хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсен пултарулăхĕнче чун хавалĕпе А. Пушкинпа çывăх пулнине яр уççăн кăтартса пачĕç. Вĕсен тăрăшулăхне хаклакан жюри членĕсем – республикăри паллă çынсем: Николай Зимин – Пĕтĕм Раççейри музыка обществин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ; Анна Кутузова – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки; Владимир Григорьев – çамрăксен М. Сеспель ячĕллĕ театрĕн актерĕ тата режиссерĕ.

Александр Сергеевич Пушкинăн тĕрлĕ вăхăтра çырнă сăввисем, поэма сыпăкĕсем, унăн сăввисемпе çырнă романссем янăрарĕç вулавăшра, сцена çинче тĕрлĕ повеçсемпе юмахсенчен хатĕрленĕ сценкăсем пулчĕç.

Жюри хакланипе пирĕн 6 çынран тăракан ушкăн 1-мĕш степеньлĕ диплома тивĕçрĕ. «Я лиру посвятил народу своему» номинацире Маргарита Пушкарева хăй ăсталанă пуканесемпе «О попе и работнике его балде» юмаха лартса парса çĕнтерчĕ. Москакассинчи Елена Пушкина вара аслă поэтăн нянине Арина Родионовнана чăвашла тарăннăн сăнласа пачĕ. Пухăннисене вăл пĕччен çеç А. Пушкинăн пултарулăхĕпе чăвашла паллаштарчĕ. Çак уйрăмлăха жюри членĕсем уйрăмăн палăртса хăварчĕç, 2-мĕш степеньлĕ дипломпа чысларĕç.

Хунтăкассинчи Вячеслав Пагеев А. Пушкина халалласа хăй çырнă сăввишĕн 2-мĕш степеньлĕ диплома тивĕçрĕ.

Палăртмалла, çак уява куç япăх куракан ачасен Шупашкарти шкул-интернатĕнче вĕренекенсем те нумайăн хутшăнчĕç. Вĕсем хушшинче пирĕн район çамрăкĕсем те пур: Кристина Павлова, Алексей Мишин.

Пирĕн фестивальте асамлă кĕвĕ, шӳтлĕ кулă, чунран шăранакан сăвăсем пулчĕç. Вĕсем пире пĕр чăмăра пĕрлештерчĕç.

А. МИХАЙЛОВА,
куç курманнисен районти обществин ертӳçи.

ОАО «Чувашская медицинская страховая компания» сообщает

Уважаемые жители Моргаушского района!

Коллектив ОАО «Чувашская медицинская страховая компания» искренне поздравляет вас с наступающим Новым 2010 годом и Рождеством Христовым!

Новый год - это не просто смена дат в календаре, это хороший повод подвести итоги, задуматься о будущем.

В минувшем, 2009 году, как и на протяжении 17 лет, ОАО «Чувашская медицинская страховая компания» стремится обеспечить здоровье и спокойствие людей, гарантируя ответственность компании по ее обязательствам.

В страховом портфеле нашей кампании - 13500 договоров по обязательному и добровольному медицинскому страхованию. Более 30 наших страховых представителей и агентов в районах и городах республики осуществляют общение с клиентами, помогают каждому из 250000 наших застрахованных реализовать свое право на выбор медицинского учреждения и врача, определить себе услуги по потребности. Своей деятельностью мы стараемся нашу помощь клиентам сделать как можно значительнее и полнее, научить людей предусмотрительности и заботе о себе, чтобы они сохранили активность и трудоспособность путем проведения профилактических и оздоровительных мероприятий.

В 2009 году в рамках выполнения Территориальной программы ОМС фактическая сумма на оплату медицинских услуг, оказанных нашим застрахованным превысила 600,4 млн. руб.

Уходящий год был не простым, но он дарил нам маленькие и большие победы и достижения, которые позволили обрести новый бесценный опыт жизни.

2009 год убедительно доказал, что мы способны на очень многое, и несмотря на трудности, готовы добиваться высоких результатов, реализовывать все наши планы, сохранять стабильность.

Новый год - это всегда надежда на лучшее, возможность все начать с чистого листа, это хороший повод побыть с теми, кто вам по-настоящему дорог.

Пусть новогодняя ночь согреет всех нас теплом домашнего очага, любовью родных и близких, а наступающий 2010 год станет годом добрых перемен и удач! Желаем вам здоровья, добра, успехов, благополучия, осуществления самых смелых желаний и планов! Будьте счастливы в Новом году!

Генеральный директор
Т.М. ВИШТЫНЕЦКАЯ.